УТВЕРЖДАЮ
Проректор БУ ЧР ДПО
«Чувашский республиканский
институт образования»
Минобразования Чувашии

…………Ж.В. Мурзина

«28» октября 2021 г.

**Государственная итоговая аттестация по образовательным программам основного общего образования в форме единого республиканского экзамена**

**Спецификация**
контрольных измерительных материалов для проведения в 2022 году единого республиканского экзамена по чувашскому языку

Подготовлен кафедрой чувашского языка и литературы
БУ ЧР ДПО «Чувашский республиканский институт образования»
Минобразования Чувашии

**Чăваш чĕлхипе 2022 çулта тытмалли республикăн пĕрлехи экзаменĕн тĕрĕслевпе хаклав материалĕсен спецификацийĕ**

**1. Республикăн пĕрлехи экзаменне ирттермелли тĕрĕслевпе хаклав материалĕсен тĕп тĕллевĕ** – 9 класс пĕтерекен ачан чăваш чĕлхипе пухнă пĕлĕвне пĕтĕмĕшле аттестаци картинче хакласси.

**2. Тĕрĕслевпе хаклав материалĕсен содержанине палăртакан документсем**

Чăваш шкулĕн 9-мĕш класне пĕтернĕ май чăваш чĕлхипе тытмалли экзамена ирттермелли йĕркене, экзамен материалне хатĕрлессипе çыхăннă ĕçсене Чăваш Республикин вĕренӳ тата çамрăксен политики министерстви кăтартса парать. Экзамен содержанийĕ министерство йышăннă документсенчи нормăпа килĕшсе тăрать.

**3. Республикăн пĕрлехи экзаменĕн тĕрĕслевпе хаклав материалĕсен тытăмĕпе содержанийĕ**

Тĕрĕслевпе хаклав материалĕ 9 ĕçе пĕрлештерекен 3 пайран тăрать.

1-мĕш пайра итленĕ текста çывăх изложени çырмалла (1-мĕш ĕç).

2-мĕш пай (2-8-мĕш ĕçсем) кĕскен хуравламалли ĕçсенчен тăрать.

Кĕскен хуравламалли çакăн йышши ĕçсене палăртмалла:

– сăмах (сăмахсем) çырса хуравламалли ĕçсем;

– тĕрĕс хуравсен цифрисене çырмалли ĕçсем.

Экзамен ĕçĕн 3-мĕш пайĕнче – итленĕ тата вуланă текстсем тăрăх калăпăшĕ енчен пысăках мар ăслав сочиненийĕ хайламалла.

Вĕренекенсен пĕлĕвĕпе хăнăхăвĕсене экзаменра тулли те ирĕклĕ хуравлаттарса (изложени тата сочинени çырса) тата хатĕр хуравсенчен пĕрне суйлаттарса тĕрĕслеççĕ.

**4. Ĕçсене экзамен ĕçĕн пайĕсене кура уйăрса тухни**

Ĕçсене экзамен ĕçĕн пайĕсене кура уйăрса тухнине 1-мĕш таблицăра кăтартнă.

*1-мĕш таблица*

*Ĕçсене экзамен ĕçĕн пайĕсене кура уйăрса тухни*

| Пай | Ĕç шучĕ | Пĕтĕм балл сумми | Ĕç тĕсĕ |
|---|---|---|---|
| 1-мĕш пай | 1<br>(1-ĕш ĕç) | 6 | Тулли хуравламалли ĕç |
| 2-мĕш пай | 7<br>(2-8-мĕш ĕçсем) | 7 | Кĕскен хуравламалли ĕçсем |
| 3-мĕш пай | 1<br>(9-ĕш ĕç) | 10 | Тулли хуравламалли ĕç |
| 1-мĕш тата 3-мĕш пайсем | | 10 (тĕрĕс çырма пĕлнишĕн) | |
| **Пĕтĕмпе** | **9** | **33** | |

**5. Предмет результачĕсен ушкăнĕсене хакламалли ĕçсене пайлани**

«Чăваш чĕлхи» предмета вĕреннин предмет результачĕсен ушкăнĕсене хакламалли ĕçсене мĕнле пайланине 2-мĕш таблицăра кăтартнă.

*2-мĕш таблица*

*Предмет результачĕсен ушкăнĕсене хакламалли ĕçсене пайлани*

| Вĕреннин предмет результачĕсен ушкăнĕсем (ФГОСпа килĕшӳллĕн) | Ĕç шучĕ | Чи пысăк балл | Миçе процент йышăнни |
|---|---|---|---|
| Тĕрлĕ вĕренӳ предмечĕсемпе тухăçлă вĕренме пулăшакан пуплев ĕçĕ-хĕлĕн тĕп тĕсĕсене (вулав, аудировани (итлев), калав, çыру) алла илни | 2 | 16 | 48 |
| Чĕлхене наука тĕлĕшĕнчен пĕлнине анлăлатни тата системăлани; чĕлхе единицисемпе шайĕсем пĕр-пĕринпе çыхăннине ăнланни; чĕлхе пĕлĕвĕн тĕп ăнлавĕсене, единицисене тата чĕлхен грамматика категорийĕсене ăша хывни | 2,3-мĕш ĕçсем | | |
| Сăмах пуянлăхне ӳстересси, шухăша тĕрĕс те ăнланмалла уçса пама йышлă лексикăпа тĕрлĕ грамматика хатĕрĕпе усă курни | 2,3-мĕш ĕçсем | | |
| Литература чĕлхин тĕп (орфоэпи, лексика, грамматика, орфографи, пунктуаци) нормисене, пуплев этикечĕн нормисене пĕлни; вĕсемпе кулаçура тата çырура усă курасси; пуплеве якатма тăрăшни; лексикăн тата фразеологин стиль уйрăмлăхĕсемпе пĕлсе усă курни | 1,3-мĕш ĕçсем (пĕтĕмĕшле) | 10 | 31 |
| **Пĕтĕмпе** | **9** | **33** | **100** |

**6. «Чăваш чĕлхи» предмет содержанийĕн тĕп пайĕсем тăрăх ĕçсене пайлани**

«Чăваш чĕлхи» предмет содержанийĕн тĕп пайĕсем тăрăх ĕçсене мĕнле пайланине 2-мĕш таблицăра кăтартнă.

*3-мĕш таблица*

*«Чăваш чĕлхи» предмет содержанийĕн тĕп пайĕсем тăрăх ĕçсене пайлани*

| Пайсем | Ĕç шучĕ | Чи пысăк балл | Миçе процент йышăнни |
|---|---|---|---|
| Пуплев. Итлени. Текста тĕрĕс ăнланни. Изложени. | 1 | 7 | 21 |
| Пуплев. Вулав. Çырулла пуплеве тĕрĕс ăнланни | 1 | 1 | 3 |
| Чăваш пуплевĕн илемĕ | 1 | 1 | 3 |
| ОРфографи | 1 | 1 | 3 |
| Лексика. | 1 | 1 | 3 |
| Синтаксис | 2 | 2 | 6 |
| Пункутуаци | 1 | 1 | 3 |
| Пуплев. Çыру. Панă темăпа çырулла текст туни | 1 | 9 | 27 |
| Тĕрĕс çырма пĕлни | 1,3-мĕш пайсем (пĕтĕмĕшле) | 10 | 31 |
| Пĕтĕмпе | 8 | 33 | 100 |

Чĕлхе материалне республикăн пĕрлехи экзаменне кĕртессипе ĕçсене мĕнле пайланине 4-мĕш таблицăра кăтартнă.

*4-мĕш таблица*

*Чĕлхе материалне кура ĕçсене пайлани*

| Ĕç тĕсĕ | Ĕç шучĕ | Чи пысăк балл | Миçе процент йышăнни |
|---|---|---|---|
| Изложени çырасси | 1 | 7 | 21 |
| Тĕрлĕ тишкерӳ туни | 7 | 7 | 21 |
| Сочинени çырасси | 1 | 9 | 27 |
| Тĕрĕс çырма пĕлни | | 10 (сочиненипе изложени çырни тăрăх) | 31 |
| Пĕтĕмпе | 9 | 33 | 100 |

**7. Республикăн пĕрлехи экзаменĕн тĕрĕслевпе хаклав материалĕсене кăткăслăх тĕлĕшĕнчен пайлани.**

Тĕрĕслевпе хаклав материалĕсем пурте пĕлме тивĕçлĕ ĕçсенчен тăраççĕ.

**8. Чăваш чĕлхипе тытмалли экзамен вăхăчĕ**

Экзамен ĕçĕсене тума 3 сехет те 55 минут (235 минут) уйăрнă.

**9. Экзаменра усă курма ирĕк панă материалсем**

Экзаменра орфографи словарĕсемпе усă курма юрать.

**10. Экзамен ĕçĕсене хакламалли критерисем**

Пĕрремĕш ĕçĕн хуравне ятарласа хатĕрленĕ критерисемпе хаклаççĕ. Изложение тĕрĕс çырсан пĕтĕмпе 6 балл пухма май пур.

Иккĕмĕш пайăн ĕçĕсене тĕрĕс тусан шкул ачи кашни ĕçшĕн 1-ер балл илет. Хурав тĕрĕс пулмасан е вăл пачах пулмасан – 0 балл лартаççĕ. 2-мĕш пайăн ĕçĕсене тĕрĕс тусан пĕтĕмпе 7 балл пухма май пур.

Виççĕмĕш пайри ĕçĕн хуравне ятарласа хатĕрленĕ критерисемпе хаклаççĕ. Сочинение тĕрĕс çырсан пĕтĕмпе 10 балл пухма май пур.

Тĕрĕс çырма пĕлнине те ятарласа хатĕрленĕ критерисемпе хаклаççĕ. Тĕрĕс çырма пĕлнишĕн пĕтĕмпе 10 балл пухма май пур.

Кашни критерипе чи пысăк балл илес пулсан – экзамен ĕçĕшĕн ача пĕтĕмпе 33 балл пухĕ.

Тĕп вĕренĕвĕн вĕренӳ программисемпе патшалăхăн пĕтĕмлетӳ аттестацине ирттермелли йĕркепе (Раççей Çутĕç министерстви тата Рособрнадзор 2018 çулхи чӳкĕн 07-мĕшĕнче кăларнă 189/1513 №-лĕ приказ) килĕшӳллĕн кашни ĕçе пĕр-пĕринпе канашламасăр икĕ эксперт тĕрĕслет. Енчен те вĕсем лартнă балсем тӳр килмесн ĕçе виççĕмĕш эксперт тепĕр хут пăхса тухса хак парать.

Виççĕмĕш эксперта предмет комиссийĕн председателĕ экзамен ĕçне маларах тĕрĕслемен экспертсенчен палăртать.

Виççĕмĕш эксперта экзамен ĕçне маларах тĕрĕсленĕ экспертсем лартнă балсемпе паллаштараççĕ. Виççĕмĕш эксперт лартнă балл татăклă шутланать, ун хыççăн урăх тĕрĕслемеççĕ.

Пĕтĕм ĕçе тĕрĕслесе икĕ эксперт лартнă хаклав 10 е ытларах балпа уйрăлса тăрать пулсан виççĕмĕш эксперт 1-9-мĕш ĕçсене кашни критери тăрăх тепĕр хут тĕрĕслет.

**11. Экзамен ирттермелли условисем**

Чăваш чĕлхипе экзамен ирттерекен аудиторие филологсене кĕртмеççĕ. Экзамена йĕркелесе тăма чăваш чĕлхипе литератури вĕрентекенне суйлама юрамасть.

Экзамен тытакансем чи малтан изложени текстне итлеççĕ. Аудио çине çырса илнĕ текста итленĕ май черновикра çыркаласа пыма юрать. Кайран итленĕ текста çывăх изложени çырмалла.

*5-мĕш таблица*

*Изложени çырмалли йĕрке*

| № | Организатор ĕçĕ | Экзамен тытакансен ĕçĕ | Вăтам вăхăт |
|---|---|---|---|
| 1. | Аудио çине çырса илнĕ текста пĕрремĕш хут итлеттерни | Текста итлеççĕ. Итленĕ май хуравăшра (черновикра) çыркаласа пыраççĕ | 3-4 минут |
| 2. | Текста ăнланма вăхăт пани | Черновиксемпе ĕçлеççĕ | 5-6 минут |
| 3. | Аудио çине çырса илнĕ текста иккĕмĕш хут итлеттерни | Текста итлеççĕ. Итленĕ май хуравăшра (черновикра) çыркаласа пыраççĕ | 3-4 минут |
| 4. | Изложение çырма пуçламалли тата словарьпе усă курма май пурри çинчен калаççĕ | | |
| 5 | | Изложени çыраççĕ | |

Изложени çырнă хыççăн 2-3-мĕш пайри ĕçсене тăваççĕ.

Орфографи словарĕпе экзамен ĕçĕн пур пайне те тунă чух усă курма право пур.

**12. 2022 çулхи тĕрĕслевпе хаклав материалне 2021 çулхипе танлаштарсан кĕртнĕ улшăнусем.**

2022 çулхи тĕрĕслевпе хаклав материалне 2021 çулхипе танлаштарсан экзамен тытăмĕ те, хаклав критерийĕсем те улшăнман.

*Хушса пани*

**9-мӗш класс пӗтерекенсем чӑваш чӗлхипе тытмалли республикӑн пӗрлехи экзаменӗн тӗрӗслевпе хаклав материалӗсен варианчӗн пӗтӗмлетнӗ планӗ**

| | Экзамента тӗрӗслекен пӗлӳ содержанийӗн элеменчӗсем | Содержани элеменчӗсене тӗрӗслемелли кодсем | Пӗлӳ шайне кӑтартакан кодсем | Чи пысӑк балл | Ӗҫе тумали вӑхӑт (мин.) |
|---|---|---|---|---|---|
| 1. | **Сӑмахӑн тӗрлӗ (фонетика, морфема, сӑмах пулӑвӗ, лексика, морфологи), сӑмах майлашӑвӗпе предложенин синтаксис, текстӑн тӗрлӗ енлӗ тишкерӗвне тума хӑнӑхтарни:** сасӑпа сас паллине уйӑрма пултарни; сӑмахӑн сасӑ шутне палӑртни; сӑмаха сыпӑксем ҫине тӗрӗс пайлани; сасӑсене тишкерни; фонетика, морфема, морфологи, лексика, сӑмах пулӑвӗн тишкерӗвне туни. **Тӗрлӗ вӗренӳ предмечӗсемпе тухӑҫлӑ вӗренме пулӑшакан пуплев ӗҫӗ-хӗлӗн тӗп тӗсӗсене (вулав, аудировани (итлев), калав, ҫыру) алла илни:** тӗрлӗ текста (сӑнлав, калав, ӑслав) ӑнланни тата ӑнлантарса пани; текста тӗрлӗ енчен тишкерни; унӑн содержанине сӑмахпа е ҫырса уҫса пани; текстӑн шухӑш пӗр пӗтӗмлӗхне, пуплев ҫыхӑнулӑхне тата шухӑшсене йӗркипе уҫса пынине хаклама пултарни. **Сӑмах пуянлӑхне ӳстересси, шухӑша тӗрӗс те ӑнланмалла уҫса пама йышлӑ лексикӑпа тӗрлӗ грамматика хатӗрӗпе усӑ курни:** тӗрлӗ текст хатӗрленӗ чух словарьсемпе пӗлсе усӑ курни; информаци васкавлӑ шыранӑ чух тӗрлӗ словарьпе усӑ курма пултарни; сӑмахӑн лексика (тӳрӗ тата куҫӑмлӑ) пӗлтерӗшне, усӑ курас уйрӑмлӑхӗсене палӑртас, пӗр пӗлтерӗшлӗ тата нумай пӗлтерӗшлӗ сӑмахсене уйӑрас, нумай пӗлтерӗшлӗ сӑмахсене тата омонимсене пӗрпӗринчен уйӑрас тӗллевпе ӑнлантару словарӗсемпе усӑ курма пултарни; чӗлхе нормисене пӗлес тӗллевпе орфографи тата орфоэпи словарӗсемпе усӑ курма пултарни; фразеологизмсен пӗлтерӗшӗсене палӑртма фразеологи словарӗсемпе усӑ курма пӗлни; морфема тата сӑмах пулӑвӗн тишкерӗвне тӑвас тӗллевпе этимологи словарӗсемпе усӑ курма пултарни; синонимсем, антонимсем тупас тӗллевпе словарьсемпе усӑ курма пултарни, сӑмах пӗлтерӗшне пӗлме куҫару словарӗсемпе усӑ курма пултарни | 11<br>8.1<br>8.4<br>8.6<br>9.3<br>9.4<br>9.2<br>6.1 | 2.1<br>2.4<br>3.1<br>3.3<br>3.5<br>3.6<br>3.8-3.10 | 7 | 90 |
| 2. | **Сӑмахӑн тӗрлӗ (фонетика, морфема, сӑмах пулӑвӗ, лексика, морфологи), сӑмах майлашӑвӗпе предложенин синтаксис, текстӑн тӗрлӗ енлӗ тишкерӗвне тума хӑнӑхтарни:** сасӑпа сас паллине уйӑрма пултарни; сӑмахӑн сасӑ шутне палӑртни; сӑмаха сыпӑксем ҫине тӗрӗс пайлани; сасӑсене тишкерни; фонетика, морфема, морфологи, лексика, сӑмах пулӑвӗн тишкерӗвне туни | 5.1-5.12 | 1.1 | 1 | 1.3 |
| 3. | **Литература чӗлхин тӗп (орфоэпи, лексика, грамматика, орфографи, пунктуаци) нормисене, пуплев этикечӗн нормисене** | 7.1-7.5 | 1.1 | 1 | 10 |

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| | **пĕлни; вĕсемпе кулаçура тата çырура усă курасси; пуплеве якатма тăрăшни; лексикăн тата фразеологин стиль уйрăмлăхĕсемпе пĕлсе усă курни:** хальхи чăваш литература чĕлхин орфоэпи правилисене пăхăнса калаçни; сăмахра пусăма тĕрĕс лартма пĕлни; синонимсене пĕлтерĕш тата стиль тĕлĕшĕнчен уйăрма пĕлни, вĕсемпе пуплевре пĕлсе усă курни; грамматика нормисене пăхăнни; текста тĕрлĕ нормăна пăхăнса йĕркелени | | | | |
| 4. | **Сăмахăн тĕрлĕ (фонетика, морфема, сăмах пулăвĕ, лексика, морфологи), сăмах майлашăвĕпе предложенин синтаксис, текстăн тĕрлĕ енлĕ тишкерĕвне тума хăнăхтарни:** сасăпа сас паллине уйăрма пултарни; сăмахăн сасă шутне палăртни; сăмаха сыпăксем çине тĕрĕс пайлани; сасăсене тишкерни; фонетика, морфема, морфологи, лексика, сăмах пулăвĕн тишкерĕвне туни | 5.1-5.14 | 1.1 | 1 | 10 |
| 5. | **Литература чĕлхин тĕп (орфоэпи, лексика, грамматика, орфографи, пунктуаци) нормисене, пуплев этикечĕн нормисене пĕлни; вĕсемпе кулаçура тата çырура усă курасси; пуплеве якатма тăрăшни; лексикăн тата фразеологин стиль уйрăмлăхĕсемпе пĕлсе усă курни:** хальхи чăваш литература чĕлхин орфоэпи правилисене пăхăнса калаçни; сăмахра пусăма тĕрĕс лартма пĕлни; синонимсене пĕлтерĕш тата стиль тĕлĕшĕнчен уйăрма пĕлни, вĕсемпе пуплевре пĕле усă курни; грамматика нормисене пăхăнни; текста тĕрлĕ нормăна пăхăнса йĕркелени | 6.1-6.6 | 1.1 | 1 | 10 |
| 6. | **Вулавăн тĕрлĕ тĕсне алла илни, вĕренÿпе наука, публицистика, илемлĕ стильпе çырнă текстсен содержанине тĕрĕс ăнланни:** 400-450 сăмахран кая мар текстсен (калав, сăнлав, ăслай) содержанине тĕрĕс ăнланни, текстăн темипе тĕп шухăшне çырса парасси, текст содержанийĕнчен тухакан ыйтусене хуравлани | 8.1 | 2.1<br>2.3<br>2.4 | 1 | 12 |
| 7. | **Тăван чĕлхен илемлĕх мелĕсемпе усă курни:** фонетикăн, лексикăн тата синтаксисăн илемлĕх мелĕсене (эпитет, метафора, гипербола, сăпатлантару, танлаштару, фразеологизм, синоним, антоним, омоним т.ыт.те) хак пама пĕлни; фразеологизмсемпе пуплевре пĕлсе усă курни; этикет формулисемпе, междометисемпе вырăнлă та пĕлсе усă курни | 10.1 | 1.1 | 1 | 12 |
| 8 | **Сăмахăн тĕрлĕ (фонетика, морфема, сăмах пулăвĕ, лексика, морфологи), сăмах майлашăвĕпе предложенин синтаксис, текстăн тĕрлĕ енлĕ тишкерĕвне тума хăнăхтарни:** сасăпа сас паллине уйăрма пултарни; сăмахăн сасă шутне палăртни; сăмаха сыпăксем çине тĕрĕс пайлани; сасăсене тишкерни; фонетика, морфема, морфологи, лексика, сăмах пулăвĕн тишкерĕвне туни | 2.1-2.5 | 1.1<br>1.3 | 1 | 12 |

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| 9 | **Сăмах пуянлăхне ӳстересси, шухăша тĕрĕс те ăнланмалла уçса пама йышлă лексикăпа тĕрлĕ грамматика хатĕрĕпе усă курни:** тĕрлĕ текст хатĕрленĕ чух словарьсемпе пĕлсе усă курни; информации васкавлă шырана чух тĕрлĕ словарьпе усă курма пултарни; сăмахăн лексика (тӳрĕ тата куçăмлă) пĕлтерĕшне, усă курас уйрăмлăхĕсене палăртас, пĕр пĕлтерĕшлĕ тата нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсене уйăрас, нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсене тата омонимсене пĕр-пĕринчен уйăрас тĕллевпе ăнлантару словарĕсемпе усă курма пултарни; чĕлхе нормисене пĕлес тĕллевпе орфографи тата орфоэпи словарĕсемпе усă курма пултарни; фразеологизмсен пĕлтерĕшĕсене палăртма фразеологи словарĕсемпе усă курма пĕлни; морфема тата сăмах пулăвĕн тишкерĕвне тăвас тĕллевпе этимологи словарĕсемпе усă курма пултарни; синонимсем, антонимсем тупас тĕллевпе словарьсемпе усă курма пултарни, сăмах пĕлтерĕшне пĕлме куçару словарĕсемпе усă курма пултарни | 6.1<br>7.2-7.3<br>8.1<br>8.2<br>8.6<br>9.2-9.4<br>11 | 2.1-2.4<br>3.2-3.5<br>3.7-3.7 | 9 | 60 |

Пĕтĕмпе – 9 ĕç, вĕсенчен
Кĕскен хуравламалли ĕçсем – 7, туллин хуравламаллисем – 2;
Кăткăслăх енчен: Б-9.
Чи пысăк балл – 33.
Ĕçе тумалли вăхăт – 235 минут.